Приложение № 1

**Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсен регионсен шайĕнчи «Тăван чĕлхепе литературăн вăрттăнлăхĕсем» – «Загадки родного языка и литературы» интернет конкурс положенийĕ**

Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн этнокультура вĕренĕвĕ кафедри 2021 çулхи пуш уйăхĕн 18-мĕшĕнче «Тăван чĕлхепе литературăн вăрттăнлăхĕсем» интернет конкурс ирттерет.

Интернет конкурса Чăваш Республикинче тата республика тулашĕнче чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекен учительсем хутшăнаççĕ.

**2. Интернет конкурс тĕллевĕсемпе задачисем**

– чăваш чĕлхипе литературине тата вĕсене вĕрентмелли методикăна ăста пĕлекенсене тупса палăртасси,

– интернет технологийĕсемпе вĕренӳ ĕçĕнче усă курас хăнăхăва малалла аталантарасси.

**3. Интернет конкурса ирттермелли йĕрке**

Интернет конкурса хутшăнакансен 2021 çулхи пуш уйăхĕн 18-мĕшĕнче 13 сехет те 30 минутра https://forms.gle/FkGa4qBtYQDKiXnb9 адреспа кĕрсе регистрациленмелле те тӳрех конкурс ыйтăвĕсене хуравламалла.

Ыйтусене хуравлама 60 минут уйăрнă. Конкурс ыйтăвĕсене чăваш шрифчĕпе усă курса хуравлăр. Район (хула), шкул ячĕсене тĕслĕхре кăтартнă пек çырăр.

Электрон почти урлă хуравсене йышăнмаççĕ, пăхса та тухмаççĕ.

Интернет конкурса укçалла ирттерме палăртнă.

Конкурса хутшăнас текенсен Раççей Сбербанк уйрăмĕсенче 305 тенкĕ тӳлемелле пулать. Тӳлени çинчен калакан квитанци копине пуш уйăхĕн 17-мĕшĕччен chrio49@rchuv.ru адреспа ярса памалла. Тӳлеменнисен ĕçĕсене пăхса тухмаççĕ.

**4. Çĕнтерӳçĕсене палăртни тата чыслани**

Интернет конкурс çĕнтерӳçисемпе призерĕсене Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн дипломĕсемпе чыслаççĕ. Çавăн пекех, конкурса хутшăнакан кашни вĕрентекене Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн сертификатне параççĕ.

**5. Çыхăну адресĕ**

Конкурса йĕркелекенсен адресĕ:

428001 Шупашкар хули, М. Горький проспекчĕ, 5-мĕш çурт, Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ, 204-мĕш кабинет.

Кирлĕ информаци chrio.cap.ru сайтра тупма пулать.

Тел/факс – 89050293941; E-mail: chrio49@rchuv.ru